

# ÇĂВАРНИ

***(4-мĕш класс валли хатĕрленĕ уяв сценарийĕ)***

ТИМОФЕЕВА Тамара Юрьевна,
Муркаш районĕнчи
Шурчари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан
тĕп шкулта вĕрентекен

Тĕллевсем: 1) хамăр тăрăхра, Шурча таврашĕнче, тытса пыракан авалхи çăварние сăнласа парасси; 2) çитĕнекен ăрăва мăн асатте-асаннесен, кукаçи-кукамисен йăли-йĕркипе паллаштарасси.

Кирлĕ хатĕрсем: çăварни чупмалли хатĕрсем; çăварни уявĕн апат-çимĕçĕ; улăм кĕлтинчен тунă, çĕтĕк-çатăк çакнă катемпи.

Сцена хыçĕнче çăварни юрри илтĕнет. (Çырса илнĕ юрă.)

Тор лашине перн ма кӳлес мар,
Çăварни чопса перн ма килес мар.
Торта толли ай тор лаши,
Ик шăнкравлă хора пĕкки.
Твансем патне перн ма килес мар,
Вĕсен тĕлне перн ма пĕлес мар.
Кĕрекене перн ма ларас мар,
Кĕтнĕ хăни перн ма полас мар.

Сцена çине ертсе пыракансем иккĕн тухаççĕ.

1-мĕш ертсе пыракан. Эй, ял-йышăм, атьсемри! Çăварни юрри янăрать. Çăварни çитрĕ пулмалла, çуркуннене йыхăрать. Урапа çуни хатĕр-и, пир-арне хăмтартăр-и? Пурте кирлĕ-çке: шор çип, шлапир, палчас, штольпи, лапрашки. Е кураксем вĕçсе килĕç те... «Тĕртсе касман пир-артан курак йăва çавăрать», — тетчĕ ĕлĕк куками. Юр ирĕлсе кайиччен пир-ар тĕртсе, шуратса, Мăн кунччен васкамалла.

2-мĕш ертсе пыракан. Çăварни, çăварни тетĕн. Мĕн-ха вăл çăварни? Каласа кăтартсамччĕ...

1-мĕш ертсе пыракан.

Итле, тусăм, эс, тăнла...
Нарăс уйăх вĕçнелле,
Кив уйăхĕн кунĕнче
Мăн çăварни çывхарать.
Çĕнĕ уйăх çуралсан
Кĕçĕн çăварни çитет.
Çăварни хушши пĕр эрне —
Çапла пулнă ĕмĕртен.

Сцена хыçĕнчен ача-пăча кулни, кăшкăрашни илтĕнет. Ачасем юрласа кĕреççĕ:

Эх, çăварни, çăварни,
Çăвара карса килтĕн-и?
Çăварна пултăр икерчи,
Пире пултăр катаччи!

1-мĕш ача. Мĕн, эсир, пире хапăл тăватăр-и, тумастăр-и? Çăварни чупма тухрăмăр.

2-мĕш ертсе пыракан. Çăварни, çăварни тетĕр. Ун çинчен тĕплĕнрех каласа парăр-ха.

1-мĕш ача. Çăварни чухне чăвашсем
Тăвансем патне çӳренĕ.
Ялтан яла шăнкрав çакса,
Тур лашине кӳлсе тухса
Çăварни чупса çӳренĕ.

2-мĕш ертсе пыракан. Апла эпир чăнах çăварни чупса килтĕмĕр. Ăçта çăварни икерчи тата çăварни сăри?

Ачасене икерчĕпе, хăнасене сăрапа сăйлаççĕ.

3-мĕш ача. Ну, халĕ çăварни юрри юрлар.

Пурте юрлаççĕ.

Çăварни çони, хора çони,
Тор лашине ай йорăхлă.
Çăварни çони, хоплă çони,
Çăварни чопма ай йорăхлă.
Йорт-йорт лашам, ай йорт лашам,
Сан йорттуна эп йоратам.
Йорла, тăван, эс йорруна,
Сан йорруна эп йорлам.
Çăварни сăри ай кăпăклă,
Пире ĕçме ай вăхăтлă.
Çима тутлă ай икерчи,
Чопас килет ай катаччи.
Тав коркине ай ĕçер-и?
Çол коркине ай тытар-и?

Чипер йолăр, ай сыв полăр,
Пире манасран пырса корăр.

Сцена çинчен çăварни чупакансем тухса каяççĕ.

2-мĕш ертсе пыракан. Çакăн пек анчах пулать-и çăварни?

Сцена çине кулса, ахлатса çара çунашка, ун хыçĕнче катемпиллĕ çунашка туртса ачасем тухаççĕ.

Пурте. Çăварни чупма, катаччи ярăнма тухрăмăр!

1-мĕш ача. Вăт, ачасем, ĕлĕк кукаçипе кукамми катаччи мĕнле ярăннине каласа парам-и?

Пурте. Каласа пар!

1-мĕш ача.
Çăварни чухне çамрăксем
Çара çуна туртса тухса
Тăвайккине васканă.
Чи малтан çунапала
Ватă çынна ярăнтарнă.

2-мĕш ача.
Çуни кайтăр маларах,
Кантăр пултăр вăрăмрах.
Акнă кантăр пуссине
Сала кайăк ан куртăр,
Кăсăя та ан çитĕр.

3-мĕш ача.
Çăварни чухне юр çусан
Мăйăр ăнса пулать тет.
Çăварни хыççăн юр çусан —
Йытă çӳллĕш çусан та —
Çуна йĕрĕ çухалман.

4-мĕш ача.
Мăн çăварнипе кĕçĕнни
Пĕр-пĕринпе тупăшнă.
Мăн çăварни алхасса
Пур-çук çырма-çатрана
Кĕртсем хӳсе тултарнă.
Кĕçĕнниййĕ ялкăшса
Çур акине çывхартнă.

5-мĕш ача.
Эх, çăварни, çăварни!
Мĕнле лайăх катаччи!

Пĕри çав хушăра çара çунашкана туртса тухса каять. Теприсем катемпиллĕ çунашкана сцена варрине илсе тухаççĕ.

2-мĕш ертсе пыракан. Э-э, кусем ăçта каяççĕ? Ку катемпи мĕн тума?

1-мĕш ертсе пыракан. Кăна вара, ачасем, сирĕнтен ыйтса пĕлмелле.

1-мĕш ача. Ку катемпи ахаль мар,
Çĕтĕк-çатăк çакнăскер.
Пĕтĕм асап, чир-чĕре,
Ирсĕр усал таврашне
Хăйĕн çине пуçтарнă.

2-мĕш ача. Çавăнпа ăна çунтарса
Пирĕн мăн асаттесем
Тата мăн асаннесем
Усал-тĕселтен тасалнă.

Пурте. Эх, çăварни, çăварни!
Çăвар тулли икерчи,
Мĕнле лайăх катаччи!

1-мĕш ача. Айтăр катемпие çунтарар,
Пурте сывлăхлă пулар.
Çак çăварни эрнине
Çăварни чупса ăсатар!

Тухса каяççĕ.

1-мĕш ертсе пыракан. «Çăварни карчăкĕ! Тутлăхлă пул! Чипер кай! Чире-чĕре ялтан илсе кай! Ар пуçне вăй-хăват пар, арăм пуçне ырлăх-сывлăх пар!» — теççĕ ватăрах çынсем çăварнине ăсатса янă май.

Материала хатĕрленĕ чух Н.И. Егоровăн «Çăварни» очеркĕпе («Халăх шкулĕ», 1993 ç., 1 №) тата С.С. Тимофеева пенсионер, Н.М. Тюрина вĕрентекен аса илĕвĕсемпе усă курнă.